● Юбилей ●

# АСЛАМАС ÇЫННИ, АСЛАМАС МАЭСТРО

**Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ деятелĕ, чăвашсен паллă композиторĕ Анисим Васильевич Асламас утă уйăхĕн 24-мĕшĕнче 70 çул тултарать. Çавна май пирĕн корреспондент Етĕрне районĕнчи Вăрманкас Асламасра çуралса ӳснĕ Асламас маэстропа тĕл пулса калаçнă.**

**— Анисим Васильевич, 70 çулхи юбилей — пысăкран та пысăк итог. Кĕске калаçура эпир сирĕн пултарулăх çулне çĕнĕрен «утса тухма» пултараймăпăр. Уйрăм-уйрăм сыпăксене аса илнипех çырлахма тивĕ. Пултарулăх çынни чунне ырраттармасăр пĕр самант та пурăнмасть. Мĕн канăçсăрлать сире паян?**

— Эпĕ ку ыйтăва кĕтнĕ те, кĕтмен те. Хам шухăшланине пĕр пытармасăрах калам. Юлашки çулсенче мана чăркăшланса çӳрекен çын вырăннех хума тытăнчĕç. Чап çитмест, ят çитмест, çавăнпа мĕн пуррине пурне те тиркет, текенсем те çук мар. Калаçаканăн çăварне хуплаймăн. Калаçтăрах. Унпа пурнăç чăнлăхĕ урăхланмасть. Тепĕр чухне эпир ăнлавсемпе пуламсене юри пăтраштаратпăр. Культура ертӳçисем, хăйсене кирлĕ чухне, музыка искусствипе фольклора юри арпаштараççĕ. Эпĕ музыка искусстви пысăк йывăрлăха кĕрсе ӳкрĕ, тесе калаçма тытăнатăп та, мана фольклор сӳнмен, вăл пурăнать, теме пăхаççĕ. Фольклор пĕтсен, халăх пĕтет, е урăхла та çавăрса калама пулать.

Музыка искусствине профессиллĕ композиторсем кăна аталантарма пултараççĕ. «Профессилĕ» тесе эпĕ дипломлă тенĕ пĕлтерĕшпе каламастăп. Илер-ха хамăрăн классиксене. Вĕсен хальхи пек дипломсем пулман, анчах музыка теорине те, техникăна та питĕ лайăх пĕлнĕ.

**— Пултарулăх ĕçченĕсен профессии шайĕ чакса кайни музыкантсемпе композиторсене кăна пăшăрхантармасть-ха. Ку пулăм ытти союзсенче те сисĕнет.**

— Композиторсен союзĕ ку тĕлĕшпе пуринчен те маларах пырать. Вун-вуникĕ çул пĕр çĕнĕ член та йышăнман вăхăтсем те пулнă пирĕн. Композиторсен союзне «корифейсен союзĕ» теме тытăннăччĕ пĕр вăхăтра.

**— Ку асапа писательсем те тӳссе ирттернĕ. Уйрăм çынран килмен-çке ку. Системăшăн кирлĕ пулнă. Пирĕн пек республикăсенче пĕрер «представитель» тунă. Композиторсенчен, художниксенчен, писательсенчен—пĕрер. Çав «представительсем» тăрăх наци искусствине кăтартмалла пулнă. Ыттисем вара «представительшĕн» декораци пек кăна шутланнă.**

— Çавăнпа та пултарулăх хăй еврĕлĕхне хакламан. «Представитель» пулма суйласа илнĕ çынни хăй те, официаллă идеологи те талантсене пусса тăнă, вĕсене çул паман. Манăн та пурнăç хальхи пек мар, урăхларах саврăнса тухнă пулсан, тен, эпĕ те композиторсен ретне тăрайман пулăттăм-и? Çамрăк чухне ман тĕле ырă çынсем тупăнчĕç. Аслă пичче сĕннипе эпĕ 13 çулта чухне Шупашкара музыка училищине вĕренме килтĕм. Чăвашсен паллă композиторĕ, училище директорĕ Степан Максимов хатĕрленӳ курсне кĕме каларĕ. Ялта пурăннă чухнех кĕвĕсем хайлама хăтланкаласа пăхаттăм. Ун чухне килсе кĕнĕ кĕвĕсенчен хăшне-пĕрне халĕ те астăватăп. Виççĕмĕш курсра вĕреннĕ чухне Федор Тютчев сăмахĕсемпе икĕ юрă кĕвĕлерĕм.

**— Ырă çынсем тĕнчерен. вĕсем кашнин тĕлнех пулаççĕ, анчах хаклама манатпăр.**

— Ĕлĕкхи тус-юлташсем асрах. Паян кунччченех Геннадий Воробьева пытарни куç умĕнче тăрать. Юратнă композитор, ăста пианист пире ун чухне çав тери хавхалантарнă. 1939 çулта вăл пиртен уйрăлса кайрĕ.

**— Теприсем çамрăк чухнехи опытран вăтанаççĕ, халь пулсан, урăхларах çырнă пулăттăм тесе çине-çинех калаççĕ. Нумайăшĕ çамрăклăх «пылне» ним шелсĕр тĕп тăвать, çунтара-çунтара ярать.**

— Маншăн çамрăклăх кĕввисем хаклă. Геннадий Воробьева пытарнă çул эпĕ Данилов-Чалтун сăмахĕсемпе юрă çыртăм та çар юррисен конкурсне тăратрăм. Ку юрра асăрхакан пулмарĕ. 25 çул иртсен, эпĕ ăна «Шуршăл тăхлачи» музкомедире усă куртăм. Надя юрри халăхра хăвăрт сарăлчĕ, вăл пуриншĕн те юратнă юрă пулса тăчĕ. Çавăн чухнех опера çырма та хăтланса пăхрăм. Иван Саламбекăн повеçĕ тăрăх «Велиме» опера çырма тытăнтăм.

**— Эсир пултарулăх çулĕ çине асаппа тухнă, тен, çавăнпа илемлĕх виçине хăвăра валли те пĕчĕклетесшĕн мар.**

— Чăн-чăн искусство пирки калаçатпăр пулсан, илемлĕх виçине пĕчĕклетмелле мар. Пирĕн умĕнхи композиторсен шайне çитес тенĕ ĕмĕт пире ăнтăлма та тухăçларах ĕçлеме пулăшмалла. 1952 çултах мана Композиторсен союзĕн членне йышăнчĕç. Ĕмĕтленни çитрĕ, темелле ĕнтĕ. Анчах эпĕ хамăн пĕлӳ ситменнине куллен туйса тăнă. Каллех студент сакки çине лартăм. 1955 çулта Мускаври П. И. Чайковский ячĕллĕ консерваторие вĕренме кĕтĕм. Римский-Корсаков стипендине илсе вĕрентĕм. Пилĕк çул хушши Шостаковичпа, Шапоринпа, Хачатурянпа, Кабалевскипе, музыкăн ытти корифейĕсемпе тĕл пулса калаçни маншăн пĕр йĕрсĕр сухалма пултарайман. Çакăн хыççăн хама çирĕпрех туйма пуçларăм. Пултарулăх ĕçне туллин кӳлĕнтĕм. Вăрăм ĕмĕр панă-и мана, кĕске ĕмĕр-и — ăна калама пултараймастăп. Кутаранччен 10 опера, балет, музыкăллă комеди тата тĕрлĕ жанрсемлĕ 1.000 ытла произведени çыртăм.

**— Кашни произведенин авторшăн пĕрешкел мар. Ашшĕ-амăшĕн те юратнă ачисемпе пĕрлех юратманнисем те пулаççĕ.**

— Манăн юратнă произведенисемпе юратманнисем çук. Халăх юратнисемпе халăх юратманнисем вара пур. Эпĕ чăваш фольклорне тĕплĕн тишкернĕ. Унтан татăк-кĕсĕксем касса илсе кĕрĕк çĕлеме мар. Фольклорăн ăшне кĕрсе пăхас килнĕ манăн, ăна хамăн ăша хывас килнĕ. Çавăнпа кашни произведенирех кĕвĕ унăн тытăмĕ пулса тăтăр тесе тăрăшатăп. Пирĕн халăх илемлĕ кĕвве юратать, тӳрех аса хывса хăварать, ăна нумайччен асра упрать.

**— Пысăк жанрлă произведенисем пирĕн музыка искусствинче сахалрах. Искусствăна шăпах çавсем тăрăх хаклаççĕ. Пирĕн халлĕхе тĕп жанр — массăллă юрă.**

— Чăваш композиторĕсенчен чи малтан опера çыракансенчен пĕри эпĕ пулнă. 1956 çултах «Нарспи» опера-балет хайларăм. Ун хыççăн фортепианăпа оркестр валли Чăваш рапсодийĕ çыртăм. Манран маларах ораторисем çыракан пулман. Фортепианăпа оркестр валли пĕрремĕш концертсене те эпĕ хайланă.

**— Композитора литература «никĕсĕ» кирлĕ. Унсăрăн вăл ним те тăваймасть. Чылайăшĕ ăна фольклорта тупать, чылайăшĕ — хăйĕнпе пĕр вăхăтра ĕçленĕ писательсемпе поэтсен пултарулăхĕнче. Çыравçăсенчен эсир кампа çывăхрах пулнă? Хăшĕн пултарулăхĕ сире ытларах хавхалантарнă?**

— Эпĕ Петр Николаевич Осиповпа питĕ туслă пулнă. Унпа пĕрле виçĕ опера çыртăмăр. Петр Николаевичпа ĕçлеме çăмăлччĕ. Теприсем пек, тӳрккесленместчĕ, кевве килмен вырăнсене юсама ӳркенсе тăмастчĕ. Вăл хăй те музыкăна ăнланакан çынччĕ. Стихван Антонович Шавлы сăмахĕсемпе юрăсем, ораторисем, поэмăсем çырнă. Петр Петрович Хусанкай, Яков Гаврилович Ухсай сăввисене юрăсемпе романссене хывнă.

Çамрăксенчен Михаил Сунталпа, Анатолий Смолинпа туслашрăм. Михаил Сунтал «Спиридон Михайлов», «Иван Яковлев» оперăсен либреттисене хатĕрлет.

**— Эсир Аслă вăрçа хутшă**
**Вăрçă тухнă çул нумай учи**
**ще хупăннă. Çав шутра**
**вĕреннĕ музыка училищи те**

— Эпĕ виçĕ курс пĕтерме
кĕрнĕччĕ. Училищĕне хупрĕç
яла таврăнтăм. Колхозра у
чикре ĕçлеме пуçларăм. Ун
эртельте пĕкĕ аврăм. Ат
пĕрле ĕçлеттĕм. Хамăр я
вунă çухрăмра вырнаçнă С
мăкассине çӳреттĕмĕр.
çулхи кĕркунне мана та Х
Çара илчĕç. Атте мана Вăр
станцине леçсе ячĕ. Мана
пас полка çырчĕç те Мари
манне, Суслонгер станци çы
не, илсе кайрĕç. Выçăллă
тăллă усратчĕç. Çынсем
кайрĕç. Хăшĕсем тарма хăт
са пăхрĕç. Вĕсене полк умĕ
пере-пере пăрахрĕç. Пире С
линграда ăсатма хатĕр
пулнă. Анчах Сурок стан
хĕрлĕ комиссар Климент
ремович Ворошилов килни
плана аркатса янă. Вара
тавар турттаракан ваку
тиерĕç те Ярославле илсе
рĕç. Пехота училищине пĕ
ме памарĕç, фронта ăса
Тула çывăхне лекрĕмĕр.

Ку 1943 çулхи çуркунне
чĕ. Çакăнтан пуçланчĕç м
фронтри çулсем. Телефо
пулса Белорусси, Хĕвел
Прусси, Польша çĕрĕсене
тухрăм, Одер шывĕ урлă
са Берлина çитрĕм. Н
хутчен аманнă. 1945 çулта
мобилизацие лекрĕм. Фро
туссенчен пĕри сĕннипе К
ри консерваторие вĕренме
тĕм. Украина музыкин кла
кĕ Борис Николаевич Лято
ский профессор ертсе пыни
курс пĕтертĕм. Унтан чир
кайрăм та, Шупашкара
рăнма тиврĕ. Çамрăксен
рĕнче, педагогика институ
чĕ, музыка училищинче ĕçле
Тĕп ĕç, паллах, пултар
ĕçĕ пулнă.

**— Юбилей концерчĕн**
**граммине хатĕрлесе çи**
**пулĕ-ха. Мĕн-мĕн итлеме п**
**рăпăр унта?**

— Чăваш рапсодийĕн
вариантне каласа парас
Унта симфони оркестрĕ
малла. Çĕнĕ произведенисе
пулаççĕ. Программăпа ма
нах паллаштарас килмест.
сăвакан пытăр концерта,
тĕр.

**— Композитор юрăççемсĕ**
**утăм та тăваймасть. Хăш**
**юрăçпа уйрăмах килĕш**
**ĕçлетĕр?**

— Ман пултарулăхра Ми
Кольцов (драмтенор),
Андреева (колоратура со
ни), Лидия Романенко, Вл
мир Ермаков пысăк в
йышăнаççĕ. Çавăн пекех м
произведенисем хĕрарă
квартечĕн (Тамара Чума
Мария Васильева, Вера Са
ева, Зоя Денисова)
туарĕнче пулчĕç. Эпĕ хам
концертсене хутшăнмасăр
ман. Чăваш рапсодине со
пулса ертсе пынă. Мин
Ижевскра концертсем кă
нă.

**— Кирек мĕнле патшалă**
**унăн культури тăрăх пĕл**
**Пирĕн ĕнтĕ оперăпа балет**
**атрĕ пур. Филармони**
**тухнă коллектив теме те**
**се тăрар мар. Музыка ку**
**ри ӳксех юлман темелле.**

— Ку çаплах, тейĕпĕр.
чах пысăк жанрлă произве
сем пулмасан, эстрада юр
тăрăх кăна нимле халăх
турине те хакламаççĕ. П
халлĕхе хамăрăн консерва
çук. Оперăпа балет театрĕ
ци театрĕ пулса тăраймар
Ăна Раççейĕн кирек хăш
линче те уçма пулать. Пир
ци оперин театрĕ кирлĕ.
фони оркестрĕ пирки те ç
каламалла.

**— Сире вăрăм ĕмĕр пур**
**тата нумай-нумай илемлĕ**
**изведени çырма мĕн ки**
**йăлтах сунас килет.**
**пултăп, Анисим Васильеви**
— Тавах!

Денис ГОРДЕ
калаç
С. ИГНАТЬ
сăнӳкерчĕ

нтереслĕ ●